Чыслă ĕçшĕн пысăк ят

Упи тăрăхĕнче ятлă-сумлă çынсем сахал мар. Вĕсенчен пĕри — Иван Никифорович Никифоров, Социализмла Ĕç Геройĕ. Паллă педагог раштавăн 25-мĕшĕнче 90 çул тултарчĕ.

Шупашкар — Тусай маршрутлă автобусран Упи тĕлĕнче анса юлсан И. Никифоров Çавал хĕрринелле васкамасăр утрĕ. Вăрçă суранне пула ури ыратнипе мар хăвăртлăха чакарчĕ вăл. Ăна юлашки 10—15 çул хушшинче ял сăн-сăпачĕ улшăнни хăпартлантарчĕ. Пилĕк-ултă çулта пĕрре те пулин тăван ялне килсе каять-ха паллă ентешĕмĕр. Анчах çĕнĕ те çĕнĕ улшăнусем кăмăла çĕклеççĕ. Ĕлĕкхипе хальхине танлаштарма хистеççĕ. Паллах, паян та чуна тăвăрлантаракан тĕслĕхсемпе шухăшсем тĕл пулкалаççĕ-ха. Çапах та вĕсем ырă çанталăкра хура тĕтĕм тӳпере йăсăрланса пĕтнĕ пек çеç çухалаççĕ...

Аса илӳсем... Çутă та çăмăл кăпăшка çунат ытамĕпе вĕсем И. Н. Никифорова ачалăх тĕнчине илсе çитереççĕ. Чи таса та хаваслă вăхăт. Ĕмĕтпе вĕçсе çӳренĕ тапхăр.

Никифор Филипповичпа Матрена Никитична Филипповсем Йăвана вĕрентмех тăрăшнă. Вăхăчĕ çитсен, ăна хăйсенчен инçех мар вырнаçнă Çавал хĕрринчи шкула ăсатнă.

Кам кăна вĕренмен пуль çак икĕ комплектлă шкул çуртĕнче? Пурĕ 3 пӳлĕм пулнă кунта. Иккĕшĕнче классем вырнаçнă, тепринче учитель пурăннă.

Ялти 6 класлă шкултан ăс илсе тухнă хыççăн Йăван пĕр вăхăт ашшĕ-амăшне пулăшать. 1926—29 вĕренӳ çулĕсенче Шăхасанти икĕ сыпăклă шкулта пĕлĕвне ӳстерет. Тавçăруллă та пуçаруллă çамрăка пуçламăш класс учительне яраççĕ. Пĕрер çул Уйкас Юнтапара тата Кӳршĕри Янмурçинра ĕçлет Йăван. Килĕшет вĕрентекен ĕçĕ. Анчах çав тапхăрта тĕрĕс наукăпа çунатланса кайни ăна хăйĕн ĕмĕтне пурнăçа кĕртме пирвайхи утăм тума хистет. Шупашкарта педагогика институчĕ уçăлни татах та çывăхлатать.

Çапла Иван Никифоров аслă шкул студенчĕ пулса тăрать. Хавхаланса та тăрăшса вĕренет Упи каччи. Çĕнĕлĕхшĕн çунакан яш-кĕрĕмшĕн пурте интереслĕ кунта: ушкăнпа вĕрентни те, лекци-урокпа практика-лаборатори ĕçĕ те, общежитипе обществăлла пурнăç та. Студентсен наука пĕрлĕхĕн ĕçĕ-хĕлĕнче те И. Никифоров пĕр еверлĕхпе уйрăлса тăнă. Хăй шухăшне яланах уçăмлă та кĕске, тĕрĕс хуравсемпе çирĕплетме пултарнă.

Çавăнпах ĕнтĕ тавçăруллă специалиста Вăрнарти пĕрремĕш шкула ĕçлеме янă. Хăй кун-çулĕн çурринe шăпах çак поселокра ирттернĕ Иван Никифорович. Вăрнар сăн-сăпатне çĕнетсе улăштарнă çĕрте унăн тӳпи те сумлă. Мĕншĕн тесен, пĕрремĕш шкул çамрăкĕсене математика предметне вĕрентнисĕр пуçне вăл каçхи вăхăтра кунта хими заводĕнче ĕçлекенсен пĕлĕвне ӳстерессишĕн те сахал мар тăрăшнă. Ку шкулсенче ăс пухнă яш-кĕрĕм каярахпа хăйсен тавракурăмне аслă шкулсенче анлăлатнă. Тĕрĕс наукăсен вăрттăнлăхне алла çирĕп илни чылайăшне ăста инженерсемпе механиксем, мастерсемпе прорабсем, технологсем пулса тăма пулăшнă.

Теприсем вара халăх хуçалăхĕн тĕрлĕ отраслĕсене ертсе пыма пуçланă. Хими, ял хуçалăх, вăрман промышленноçĕн предприятийĕсенче хăйсем илнĕ пĕлӳпе тухăçлă усă курнă. Ăсталăхне ыттисене те парса тăнă.

Çамрăкла хастарлăхпа ĕçлекен И. Никифоров ĕмĕтне хăрушă вăрçă татать. Арçын учительсене пĕрин хыççăн теприне фронта илсе каяççĕ. Пирĕн ентешĕн черечĕ 1942 çулхи мартăн 20-мĕшĕнче çитет. Техникăна ăнланакансене тата хăй вăхăтĕнче ятарлă аслă шкулсенче физикăпа математика уйрăмне е факультетне пĕтернисене пĕр ушкăна пухаççĕ. 3 уйăх пĕлӳ панă хыççăн шофер е тракторист пулса тăни пирки пĕлтереççĕ.

Вĕренӳ курсне вĕçленĕ салтаксене кĕçех Сталинград фронтне ăсатаççĕ. 1942 çулхи кĕркунне унта пĕтĕм тĕнче пĕлекен хăрушă çапăçусем пуçланаççĕ. Фашистсем Атăл çинчи — ун чухнехи çул пуç ячĕллĕ çав хулана илессишĕн нимĕн те хĕрхенсе тăман. Кунсерен çĕршер самолет бомба пырса пăрахнă, йывăр тупăсемпе, минометсемпе, ытти ахаль хĕçпăшалпа персе тăшман пуç çĕклеме паман. Окопри салтаксемпе офицерсене те чăтма çук йывăр тивнĕ.

Юбилейсем

Гитлеровецсем сăнаса тăракан кашни метр тăрăх пĕр вырăнтан тепĕр çĕре çар хатĕрĕсем турттаракан шоферсен хăрушлăхĕ вара —вуншар хут пысăкрах. Тӳперен бомбăпа мина вилĕм кӳнĕ. Çĕр çинче машинăна тӳрремĕн вĕçекен снарядпа пуля та лекме пултарнă. Кузоври тĕрлĕ хĕçпăшал та сирпĕнсе кайса вĕлерессипе хăратнă. Вилĕм çири кĕперен те сывăхра тăнă. Вутлă тамăкра çĕршер салтак пурнăçĕ татăлнă. Пиншер çын аманнă. Пĕр çапăçу вăхăтĕнче Иван Никифоров та йывăр аманнă.

Иван Никифорович Сталинград, кăнтăр, 4, 3, 2-мĕш Украински фрончĕсенче тăшмана хирĕç çапăçнă. Хăюлăхпа паттăрлăхшăн ăна Хĕрлĕ Çăлтăр, Отечественнăй вăрçăн I степеньлĕ орденсемпе, «Сталинграда хӳтĕленĕшĕн», «Çапăçури паллă ĕçсемшĕн» Çар медалĕсемпе наградăланă.

—Эпĕ вĕрентнĕ вуншар çамрăк тĕнчен иккĕмĕш вăрçине хутшăнчĕ, чылайăшĕ тăван çĕршывшăн çапăçса пуçне хучĕ. Акă, Николай Беспалов, Руфа Краснова, Вера Кадыкова, Раиса Михайлова врачсен, Георгий Илюхин партизанăн (вăл Польшăра вилнĕ), Борис Петров десант инструкторĕн шăпи вăхăтсăр татăлчĕ. Нина Троицкая кайран строительсен поликлиникинче ĕçлерĕ, «ЧР тава тивĕçлĕ врач» ятне илчĕ,—пăшăрханса илет фронтовик.

Кайран каллех — тăван коллектив, юратнă ĕç. Тулли лава туртма хăнăхнă педагога «кӳлсе» те лартаççĕ. Кăнтăрла ачасене, каçхине ĕçлекен çамрăксене вĕрентмелле, вĕрентӳпе консультаци пункчĕн ĕçне йĕркелесе пымалла— яш-кĕрĕме пĕтĕмĕшле вăтам пĕлӳ илме пулăшмалла. Кусемсĕр пуçне обществăлла ĕç те майă таран: лектор-докладчик та, политинформаторпа агитатор та.

Класс пуçлăхĕ пулса шкул та та класс тулашĕнчи ĕçсене те туса пымалла. Ачасен ашшĕамăшĕсемпе воспитанире тĕл пулакан ыйтусене пĕрле татса памалла. Пĕр сăмахпа каласан, сахал-и ялти учителĕн куçа курăнман тата çын пĕлмен ĕçĕ? Тетрадь-дневник, реферат тĕрĕслесси те вăхăт нумай ыйтать.

Пур ĕçе те тĕплĕ, вăхăтра пурнăçлама тăрăшаканшăн—пушшех те. Иртен пуçласа сĕм çĕрлечченех халăх умĕнче Иван Никифоровичпа Серафима Павловна. Шкул мехелĕпе пурăнасси, вĕрентӳпе воспитани сывлăшĕпе сывласси хăйсен тивĕçне лайăх ăнланакан Никифоровсемшĕн пурнăç йĕрки пулса тăнă. Сăмах май каласан, мăшăрĕпе пĕр коллективра тăрăшать ентешĕмĕр. Серафима Павловна та математик, тивĕçлĕ канăва юратнă ĕçĕнченех тухнă. «Учитель, хăвна пулăшакана вĕрентсе хатĕрле»—чĕнет халăх сăмахĕ.

Çак девиза хăй пурнăçĕн тĕллевĕ тесе яланах шутланă Иван Никифорович. Вăрнарти пĕрремĕш вăтам шкулта 1935—1976 çулсенче ĕçленĕ тапхăрта ăна çирĕп пурнăçласа пынă. Хăй тĕслĕхĕпе поселокпа Вăрнар район çыннисене кăна мар, ентешĕсемпе ачисене те хавхалантарса пынă. Математика учителĕн йывăр та пархатарлă профессине вуншар çынна алла илме пулăшнă вăл.

Чылайăн унашкаллисем. И. Никифоров математикăна уйрăмах килĕштернĕ, виçĕ пĕр тăван Саперовсене, Шупашкарти патшалăх банкĕнче ĕçленĕ Раиса Вахромеева, Раиса Павлунина шкул директорне, Хусанти патшалăх Университечĕн доцентне (вăл мамататика вĕрентет) Альбина Федорова хушамачĕсене асăнчĕ. Леонид Статуев вара Çĕмĕрлери ятарлă автофургонсен коллективне ертсе пынă.

Ăста педагог ĕçне тăван çĕршыв тивĕçлипе хакланă. 1951 çулта пирĕн ентеше «РСФСР тава тивĕçлĕ учителĕ» ят панă. Мирлĕ хастарлăхне тата икĕ медальне палăртнă. 1968 çулта Иван Никифоровича Социализмла Ĕç Геройĕ ятпа чысланă.

Чи кирли вара ачисене — Алевтинăпа Раиса хăйсен шăпине парнелени. Йĕкĕрешсенчен пĕри халĕ Шупашкарти 36-мĕш шкулта ĕçлет. Унăн педагогика стажĕ 25 çул ĕнтĕ. Ашшĕпе амăшне хывса, désinstitutăн физмат факультетĕнче вĕреннĕ. Хушаматне те тахçанах улăштарнă ĕнтĕ. Мăшăрĕ пекех —Георгий Иванович Уткин —паян та пĕрре хăнăхнă коллективрах математикăпа пĕлӳ парать.

Раиса Ивановна Кожаева та тĕп хуламăртах пурăнать. Чĕрĕк ĕмĕре яхăн 18-мĕш шкулта математикăпа вĕрентет. Мăшăрĕ — Виктор Григорьевич «Текстильмаш» пĕчĕк предприятире ĕçлет. Вĕсен икĕ хĕр. Сăмах май каласан, Никифоровсен мăнукĕсем те кукашшĕпе кукамăшĕн çулне такăрлаççĕ. Женя Уткин Мускаври инженерла физикăпа техника институтĕнчен вĕренсе тухрĕ. Шупашкарти вăтам шкулта пĕлӳ илнĕ чухнех вăл республикăри ăмăртусенче пĕрре çеç мар математикăпа çĕнтернĕ. Хăй тĕрĕс наукăна юратнине пĕлĕвĕпе тата тавçăрулăхĕпе çирĕплетнĕ. Унăн арăмĕ — Настя халĕ МИФТИре ăс пухать.

Р. Кожаевăн хĕрĕ Наташа иккĕмĕш сăпăкри пиччĕшĕ пекех Мускаври пĕлӳ тĕнчине çул тытнă. Хальхи вăхăтра вăл та МИФТИре вĕренет. Кăткăс компьютерпа ĕçлекен ăста специалист пуласшăн. Йăмăкĕ, Надя, аслисен профессине килĕштернĕ пулин те, урăх ĕç суйласа илнĕ. Кăçалхи вĕренӳ çулĕнче çамрăк студентка пирвайхи хут Мускаври хурçă институчĕн лекцийĕсене çӳреме пуçларĕ. Вăл кунта та математикăпа ырă тĕслĕх кăтартать, кукашшĕпе кукамăшне лайăх паллăсемпе савăнтарать.

Этем кун-çулĕ... Çынсемшĕн ырми-канми тăрăшаканшăн вăхăт сисĕнмесĕрех иртет. Иван Никифоровичшăн та 90 çул алăкран шаккарĕ. Хамăрăн паллă ентешĕмĕре эпир çак паллă уявпа ăшшăн саламлатпăр, ырлăх-сывлăх, телейлĕ ватлăх, сурпан пек вăрăм шăпа сунатпăр.

В. КОНСТАНТИНОВ.